Сывлăх

Арçынсен сывлăха упрамалла

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Çĕршыври пĕтĕмĕшле тата республикăри демографи лару-тăрăвĕ арçынсен сывлăхĕ çине тимлĕрех пăхма ыйтать. РФ Президенчĕн тата ЧР Президенчĕн çырăвĕсенче те патшалăхăн приоритетлă задачисенчен пĕри демографи лару-тăрăвне лайăхлатасси, çынсем вилессине чакарасси тата вĕсен пурнăç тăршшĕне ӳстересси тесе палăртнăçке. Юлашки 15 çул хушшинче Раççейре 12 миллион ытла çын вилнĕ. 1992-мĕш çултанпа ачасем çураласси çынсем вилессинчен самай юлса пырать. Иртнĕ çулта кăна пирĕн çĕршывра 2 миллион ытла çын пурнăçран уйрăлнă, çураласса вара – 1 миллион та 330 ача. Чăваш Республикинчи кăтартусем те тарăн шухăша яраççĕ: 13700 ача çуралнă, 17 пин çын вилнĕ. Муркаш районĕнче 2008 çулта пурĕ 620 çын вилнĕ, 400 ача çеç çуралнă.

Çынсен пурнăç тăршшĕне илес пулсан, Раççей арçыннисем, ытти аталаннă çĕршыврисемпе танлаштарсан, 15-19 çул! сахалрах, хĕрарăмсем 7-12 çул сахалрах пурăнаççĕ. Çемьесен 19 проценчĕ ачасем çуратма пултараймаççĕ, тĕслĕхсен çурри – арçынсен айăпне пула. 1900-мĕш çулта вара çемьесен 1 проценчĕ кăна çаплисен шутĕнче пулнă. Унтанпа 100 çул анчах иртнĕ пулин те.

Паян ĕçлеме пултаракан арçынсем вилнин кăтартăвĕ 19-мĕш ĕмĕр вĕçĕнчи пек. Арçынсем пурнăçран уйрăлнин тĕп сăлтавĕсем – алкогольпе наркăмăшланни, наркотиксемпе иртĕхни, çын вĕлерни тата харпăр хăй çине алă хуни, çул-йĕр çинчи инкексем тата чĕре тымарĕсен системин чирĕсем. Акă пирĕн республикăра 2007 çулта ĕçлеме пултаракан ӳсĕмри çынсем пурĕ 5700-ĕн вилнĕ, вĕсен шутĕнчен 80 проценчĕ – арçынсем! Муркаш районĕнчи иртнĕ çул кăтартăвĕсене илес пулсан, çакнашкаллисем пурĕ 162 çын пулнă, вĕсенчен 137-шĕ – арçынсем. Ку вăл 84,6 процентпа танлашать.

Республикăра та, районта та ачасем çуралнă хисеп ӳссе пыни палăрать-ха. Пĕчĕк пепкесем вилесси тата пĕтĕмĕшле çын вилессин хăвăртлăхĕ те чакса пырать. Анчах та çынсен ĕмĕрĕн тăршшĕ «çамрăкланса» пыни питĕ пăшăрхантарать. Уйрăмах, асăнтăмăр ĕнтĕ, ĕçлеме пултаракан арçынсем вилни.

Раççейре арçынсен пурнăç тăршшĕн вăтам кăтартăвĕ 57-58 çулпа танлашать. Чăваш Республикинче çынсен пурнăç условийĕсене лайăхлатас тесе пурнăçа кĕрсе пыракан программăсем йышăннипе ку кăтарту кăшт лайăхрах. Апла пулсан та республикăра арçынсем вăтамран 61 çул çеç, хĕрарăмсем 74 çул пурăнаççĕ. Арçынсем вăтамран хĕрарăмсенчен 13 çул сахалрах пурăнаççĕ. Хулари арçынсен вăтам пурнăç тăршшĕ 62 çул, ялтисен вара – 57 çул кăна. Çак кăтартусем чи малтан çыннăн пурнăç йĕркинчен килеççĕ. Нумай чирсен сăлтавĕсем спиртлă шĕвексем ĕçнинче тата пирус туртнинче. Пирĕн районта кăна мар, çĕршывĕпех арçынсем профилактика тĕрĕслевĕсенчен тата диспансеризацирен пăрăнаççĕ. Çапла вара 5-10 çул пĕр медицина тĕрĕслевĕ витĕр те тухмаççĕ. Çак пулăм вĕсем сывă пурнăç йĕркине йышăнма тăрăшманнине çирĕплетет, сиенлĕ йăласене пăрахса хамăрăн сывлăха упрама тата юнашар çынсен сывлăхне хаклама пĕлменни пирки калать.

Çавна май «çавра сĕтел» тавра пуçтарăнса калаçакансем республикăра демографи лару-тăрăвне лайăхлатассипе тата арçынсен сывлăх шайне ӳстерессипе ЧР Патшалăх Канашне, ЧР Министрсен Кабинетне, Сывлăх сыхлавĕн, Вĕрентӳ, Спорт, Шалти ĕçсен, Культура министерствисене ятарлă программăсем хатĕрлесе мероприятисене пурнăçа кĕртсе пыма сĕнчĕç. Çак ĕçе вырăнти хăйтытăмлăх органĕсен те пур енлĕн хутшăнмаллине палăртрĕç. Пурте пĕрле тăрăшнипе çак ыйтăва вырăнтан хускатса малалла тухăçлă утăмсем тăвасса питĕ шанас килет.

Эпĕ больницăн тĕп врачĕ пулнă май тата пур медицина ĕçченĕсем те хамăрăн тĕслĕхпе район çыннисене, уйрăмах арçынсене, сывă пурнăç йĕркине тытса пыма явăçтарасшăн. Çын пурнăçĕн хуть те хăш тапхăрĕнче те тĕрлĕ хусканусем, физкультурăпа спорт мероприятийĕсене хутшăнни усăллă пулнине ĕнентересшĕн эпир.

«Арçынсене – сывлăх тата вăрăм ĕмĕр» девизпа ятарласа ăмăрту йĕркелеме шутларăмăр. Арçынсем хушшинче иртекен ăмăрту «Муркаш районĕн тĕп больници» сывлăха сыхлас муниципаллă учрежденин тĕп врачĕн кубокне çĕнсе илессишĕн пулĕ. Ăмăртăвăн тĕп условийĕ – командăсенче Муркаш районĕнче пурăнакан тата ĕçлекен 50 çул тултарнă тата аслăрах арçынсем çеç пулмалла.

Хисеплĕ спортсмен-ветеран арçынсем тата вĕсемшĕн «чирлекен» хĕрарăмсем! Сире пурне те апрелĕн 18-мĕшĕнче «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнче иртекен волейбол ăмăртăвне йыхравлатпăр. Ăмăрту 11 сехетре пуçланать. Пурне те хапăл туса кĕтетпĕр!

В.Г. ДАНИЛОВ,
ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ.

Районăн паллă çыннисем

Хисепе тивĕç çын

Çĕр çинче кашни çын хисепе тивĕç, теççĕ. Анчах хисепе те, телей пекех, валеçмеççĕçав. Апла пулсан мĕн тумалла-ха хисепе тивĕçлĕ çын пулас тесен? Камсем вĕсем хисеплĕ çынсем?

Эпĕ курни-илтни тăрăх хамăн шухăша калас тетĕп.

Кашни кунах ман куç умĕнче темĕн чухлĕ çын: атте-анне, туссем, вĕрентекенсем, ялйыш… Кашнинех сăнатăп, вĕсен ĕçне-хĕлне, çитĕнĕвĕсене, тавра курăмне, тыткаларăшĕсене пăхса тĕлĕнетĕп. Мĕн тĕрлĕ çын кăна çук пуль!

Павел Николаевич Вязов çинчен вара хаçата çырас терĕм. Атапай шкулĕн попечительсен канашĕн ĕçне çӳллĕ шайра туса пырассишĕн вăл ырми-канми тăрăшать. Павел Николаевич Атапай ялĕнче 1959 çулхи юпа уйăхĕн 12-мĕшĕнче çуралнă. 1975 çулта Атапай шкулĕнче сакăр класс пĕтернĕ хыççăн Шупашкарти строительсен техникумне вĕренме кĕнĕ. Техник-строитель специальноçне алла илнĕ. Хăйĕн ĕçри пĕрремĕш утăмĕсене вăл 1977 çулта ПСО-32 «Волгодонгидрострой» трестра тунă.

Павел Николаевич суйланă ĕçне юратса, чунтан парăнса пурнăçланă, çавăнпа коллективра та ăна хисепленĕ. Часах ăна Оркри кирпĕч тăвакан завода аслă маçтăр пулса ĕçлеме чĕннĕ. Вăл ертсе пыракан участокра вара чи лайăх ĕç кăтартăвĕсем пулнă.

Çурт-йĕр материалĕсем тăвас ĕçре хастар пулнăшăн ăна Строительсен кунĕ ячĕпе Чăваш Республикин Хисеп грамотипе наградăланă. 1985 çулта рационализаторсен фондне пуçарса янăшăн Павел Николаевич «Чи лайăх рационализатор» ят илме тивĕç пулнă.

Ĕçленĕ хушăрах 1991 çулта малалла ăнтăлакан специалист Мускаври патшалăх университетне вĕренме кĕрет.

2002 çулта Павел Николаевич Вязова Муркаш район депутатсен Пухăвĕн депутачĕ пулма суйлаççĕ.

Ĕçри çитĕнĕвĕсем курăмлă пулнипех ĕнтĕ 2005 çулта пирĕн ентеше ЧР тава тивĕçлĕ строителĕ, 2007 çулта вара Раççейĕн тава тивĕçлĕ строителĕ ятсем параççĕ.

Павел Николаевич хăйĕн тăван ялне, тăван шкулне нихăçан та манса каймасть. Часчасах вăхăт тупса килсе каять, пулăшма тăрăшать. Сăмах май каласан, унăн амăшĕ Мария Тимофеевна Вязова та çак шкулта ĕçленĕ. Çакăн пек маттур ывăл çитĕнтернинче, паллах, амăшĕн тӳпи пысăк.

Павел Николаевич ачасене тĕрлĕ ăмăртусене хутшăнма хавхалантарса тăрать. Вăл пулăшнипех шкул ачисем валли пĕр пек спорт форми туянма пултарчĕç. Шкул библиотеки те вăл пулăшнипе çĕнĕ кĕнекесем туянчĕ. Çĕнĕ çул уявĕсенче Павел Николаевич вĕренӳре лайăх ĕлкĕрсе пыракансене парнесем пачĕ, шкула вара – электронлă микроскоп.

Çакăн пек маттур та ырă çынсем пирĕн тăрăхра пулнипе эпир мăнаçланатпăр, вĕсемпе мухтанатпăр. Çакăн пек çынсем хисепе тивĕç те. Вĕсенчен тĕслĕх илесчĕ.

А. ИВАНОВА,
Атапай шкулĕнчи аслă вожатăй.

Пĕчĕк бизнес

«Ял çыннисемшĕн тăрăшатпăр»

Пĕррехинче Муркашра пĕлĕшĕме тĕл пултăм. Нумаях пулмасть вăл мунча туса лартни пирки пĕлтерчĕ. Анчах та кăмакине тупса илеймен

иккен. Çийĕнчех ăна Алексей Вячеславович Ершовпа калаçса пăхма сĕнтĕм. Мĕншĕн тесен эпĕ хам мунча кăмакине унран туяннăччĕ. Çулталăка яхăн усă куратăп, пăтăрмах таврашĕ пулман. Вĕсен предприятийĕ вара Муркашра унччен садпа пахча çимĕç комбиначĕ пулнă вырăнта вырнаçнă. Хатĕр продукцие сутма Муркаш пасарне тухнине те чылайăшĕ асăрханă пулĕ.

Кăмакасен шыв тултармалли бакĕсен тутăхас хуйхă çук. Вĕсене тутăхман тимĕртен хатĕрлеççĕ. Александр Васильев, Вячеслав Кроликов, Виталий Феофанов, Олег Владимиров сварщиксем хăйсене шанса панă ĕçе тивĕçлипе пурнăçлаççĕ.

– Хăвăрăн кăмакасене пирĕн районта кăна сутатăр-и,– интересленнĕччĕ эпĕ унран.

– Пирĕн продукцие Етĕрне, Элĕк районĕсенче, Мари Республикинчи Козьмодемьянск районĕнчи пасарсенче те çынсем хаваспах туянаççĕ. Эпир унта хамăрăн автомашинăпа тăтăшах тухса çӳретпĕр. Çитменнине кăмакасене вырăна çитерсе пама кăна мар, вырнаçтарса пама та пултаратпăр,– хуравларĕ вăл.

– Эпĕ пĕлнĕ тăрăх, Эсир мунча кăмакисем вырнаçтарса парассипе кăна ĕçлеместĕр, ытти ĕç-хĕл пирки мĕн калама пултаратăр?



– Паллă ĕнтĕ, сварка ĕçĕпе çыхăннă ытти ĕçсене те пурнăçлатпăр эпир. Сăмахран, тимĕр хапхасем туса хатĕрлетпĕр, вĕсене вырăнта вырнаçтаратпăр. Ытти оборудованисене те вырăна çитерсе вырнаçтарма пултаратпăр. Кунсăр пуçне тимĕр продукцисене сутассипе те ĕçлетпĕр. Тĕрлĕ калăпăшлă тимĕр изделийĕсене (пăрăхсене, угольниксене) сире кирек хăçан та вырăна çитерсе пама пултаратпăр.

– Хаксем пирки те пĕлес килет...

– Пирĕн хаксем ытти çĕртинчен хаклă мар. Сăмахран, Шупашкарпа танлаштарсан, хаксем самай пĕчĕк. Хамăр район çыннисене пулăшу ĕçĕсене йӳнĕрех хакпа туса парас тетпĕр. Çакă вĕсемшĕнех меллĕрех.

– Хаçат вулакансене юлашкинчен мĕн сĕннĕ пулăттăр?

– Пирĕнпе çыхăну тытни харама каймĕ. Кирек камăнне те эпир мунча кăмаки туса вырнаçтарса паратпăр, хапха, картиш тăвассипе тата ытти енĕпе сварка ĕçĕсене пурнăçлама хатĕр. Пахалăх та тивĕçлĕ шайра. Пирĕн пата пырăр, шăнкăравлăр. Эпир сире яланах хавас.

Сăн ӳкерчĕксенче: Александр Васильев, Вячеслав Кроликов, Виталий Феофанов, Олег Владимиров сварщиксем тата предприяти ертӳçи А.В. Ершов; Мунча кăмакисем, тимĕр хатĕрсем кирлĕ пулсан, 8-919-655-21-51 телефонпа шăнкăравлама пултаратăр (эпир Муркашри садпа пахча çимĕç комбиначĕ пулнă вырăнта вырнаçнă).

В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.

Çур аки умĕн

Тĕплĕн хатĕрленнине мĕн çиттĕр?

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

– Тухăçлă тыр-пул никĕсĕ – пахалăхлă вăрлăхра. Ку енĕпе ĕçсем епле пыраççĕ?

– Паянхи куна хуçалăхсенче вăрлăхăн 79 проценчĕ кондициллĕ е 2618 тонна. Кондицие ларман вăрлăх 650 тонна. Çав шутран тасалăхĕпе кондицие ларайманни 650 тонна, çум курăклă пулнипе – 484 тонна, шăтаслăхĕпе – 110 тонна. Суворов яч. хис., Чкалов яч. хис. хуçалăхсенче тата Красновăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче пĕтĕм вăрлăх кондициллĕ. «Передовик», «Свобода», «Оринино», «Сеятель», Чапаев яч. хис., Е.Андреев яч. хис. хуçалăхсенче вăрлăхăн 86-99 проценчĕ кондициллĕ. «Волга», ВТМ, «Лидер» хуçалăхсем вăрлăха вăрлăх инспекцийĕнче тĕрĕслеттермен. Çитес вăхăтрах пĕтĕм вăрлăха акмалли кондицие çитермелле.

Пирĕн элитăллă вăрлăх туянас ĕçе те лайăхлатмалла. Хальлĕхе вăл районĕпе те 3 процент кăна. Чкалов яч. хис. хуçалăхра ăна 10 тонна кӳрсе килнĕ. 2009 çул валли Чăваш Республикин бюджетĕнчен элитăллă вăрлăх туянма пирĕн района 1 млн. та 896 пин тенкĕ уйăрма палăртнă. Çавăнпа та вăхăта сая ямасăр элитăллă вăрлăх туянмалла, патшалăх паракан укçа-тенкĕпе туллин усă курмалла. Туянмалли элитăллă вăрлăх вара районта та, республикăра та пур. Кун çинчен пур хуçалăхсем те пĕлеççĕ.

– Тăпра пулăхлăхне ӳстерес тĕлĕшпе мĕнле ĕçлесе пыраççĕ хуçалăхсем?

– 2008 çулта районти 6 хуçалăхра кăна органикăллă удобрение 976 гектар çинче хывнăччĕ. Кăçал та ку енĕпе хытă тимлемелле. Çавăн пекех пурĕ Чăваш Республикин бюджетĕнчен уйăрса панă 6 миллион та 612 пин тенкĕ суммăллăх извеç, фосфор тата кали удобренине сапнă. Тăпра пулăхлăхне ӳстерессипе кăçал ку ĕçе малалла тăсатпăр. Иртнĕ çул минераллă удобрение пĕтĕмпе 2 пин тонна кӳрсе килнĕ пулсан районĕпе, 1500 тоннине Апат-çимĕç фончĕ урлă туянтăмăр. Вĕсене сапман «Хлебороб», «Волга», «Колос» хуçалăхсенче вара тыр-пул тухăçĕ 10 центнертан та иртеймерĕ. Кăçал çур аки ирттерме пурĕ 2 пин тонна минераллă удобрени кирлĕ пулсан, хальлĕхе ăна 1256 тонна кӳрсе килнĕ.

Çакна асра тытмалла, удобренисемпе усă курмасăр, пирĕн тăрăхра тухăçлă тыр-пул туса илме йывăр.

– Хуçалăхсенче техникăна çур акине хатĕрлесси мĕнле пырать?

– Ильич яч. хис., «Оринино», «Восток», «Герой», «Ударник», Суворов яч. хис. хуçалăхсенче, Муркашри чăх-чĕп фабрикинче техника паян тесен паян уя тухма хатĕр. Анчах та Ленин яч. хис., «Передовик», «Волга», «Хлебороб» хуçалăхсем пирки çакна калама çук. Хуçалăх ертӳçисен паян ку тĕлĕшпе те, çунтармаллисĕрмелли материалсем туянассипе те çине тăрса ĕçлемелле.

Кунта эпĕ тата акă мĕн каласшăн. Ял хуçалăх ĕçĕнче кашни тапхăр хăйне майлă ĕçлеме хушать. Урăхла каласан, кашни тапхăр хăйĕн стратегипе тактикине ыйтать. Ĕç тухăçлăхĕпе хăвăртлăхне ӳстерес тесен ăна çĕнĕлле йĕркелемелле. Ответлă тапхăр пуçланиччен хуçалăхсен специалисчĕсен плансемпе туса ирттермелли мероприятисене палăртмалла. Унта ĕç калăпăшĕ мĕн чухлĕ пулни те, вĕсене пурнăçламалли вăхăчĕ те, производство процесĕсен технологийĕ те паллă пултăр. Çур аки вăхăтĕнче тракторсене, ытти ял хуçалăх техникине икĕ сменăпа ĕçлеттермелле.

– Юлашки ыйту. Ĕç сыхлавĕн правилисене пăхăнассипе мĕнле лару-тăру хуçалăхсенче?

– Иртнĕ çул 5 хуçалăхра производствăра сусăрăннă тĕслĕхсем пулчĕç. «Передовикра» вара ӳсĕрле руль умне ларнине пула çыннăн пурнăçĕ татăлчĕ. Çакă пире пурне те ĕç сыхлавĕн правилисене пăхăнмалли çинчен калать. Кирек епле ĕçе те кирлĕ пек йĕркелемелле, ĕç дисциплинине, ĕç йĕркин правилисене пăхăнмалла. Должноçри çынсен ĕç тата ĕç сыхлавĕн законодательствине епле пăхăннине контрольлесех тăмалла. Ĕç сыхлавĕпе хăрушсăрлăх техникине вĕрентессине кирлĕ пек йĕркелемелле, тăтăш медосмотр тăратмалла, водительсемпе механизаторсене рейса тухас умĕн тĕрĕслемелле т. ыт. те.

– Тавах, Владислав Кириллович, калаçушăн.

Л. ПАВЛОВА калаçнă.